К 84.09(=448),
А38
Ч-38464

Хура сахал
...
пиплиоттекӗ

Леонит
Акаккӑв

# Инкесем

Хакӗ 25 пус

Ҫӑваш
кӗнеки уйрӑмӗ

Шупашкар, 1931

Национальная библиотека ЧР
4-038464
ПРОВЕРЕНО
20 10
2344

К84.09

ХУТА САХАЛ ПĔЛЕКЕНСЕН ПИПЛИОТТĔКĔ

ЛЕОНИТ АКАККĂВ

# ИНКЕСЕМ

(ТĂВАТĂ КАЛАВ)

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 2344

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1931

# УМСӐМАХ ВЫРӐННЕ.

Епӗр пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе сотсиалисӑм тӑватпӑр. Совет ҫӗршывӗн хуҫалӑхӗ ӳссе пырать. Ҫӗнӗрен пысӑк хапрӑк-савӑтсем, електритсӑ стантсисем тӑватпӑр. Йалхуҫалӑхӗ те ҫитӗнсе, колхосланса пырать. Ҫак ҫитӗнӳсем вӗсем парттин тӗп ҫулйӗрне пурнӑҫа кӗртсе пынипе анҗах пулса пыраҫҫӗ.

Анҗах пирӗн ӳсӗм ҫулӗ тап такӑр, пӗр җӑрмавсӑр мар. Ӗҫре пирӗн йӑвӑрлӑхсемпе җӑрмавсем те нумай. Совет Сойусӗн тулашӗнҗе те, ӑшӗнҗе те тӗрлӗрен клас тӑшманӗсем—кӑпиталиссем, улпутсем, пупсем, кулаксем пур майсемпе те пирӗн ӗҫе җарса лартасшӑн ӗҫлеҫҫӗ. Пирӗн пӗрмайах сыхӑ тӑмалла, клас тӑшманӗсене ҫӗмӗрсе, хамӑр ӗҫе тата хӑвӑртрах малалла шутармалла.

Ҫул ҫинҗи җӑрмавсенҗен пӗри вӑл—тӗттӗмлӗх, хут пӗлменни. Револҗугси хыҫҫӑн кулҗттурӑ тӗлӗшӗнҗен епӗр пит мала карӑмӑр пулсан та, тумалли ӗҫсем татах нумай. Кӑҫалтан пурне те хут вӗрентессине пуҫарса йанӑ, кайа йулса пыракан ӗҫхӗрарӑмсене хутла вӗрентсе пыратпӑр. Ликпунктсенҗе вӗренсе тухнӑ ӗҫхӗрарӑмсене вулама кӗнекесем кирлӗ. Ҫакна шута илсе, Җӑваш Кӗнеки Уйрӑмӗ вӗсем валҗҗи уйрӑмӑнах пӗҗӗк кӗнекесем кӑларма тытӑнать. Ку йенҗен пӑхсан, Л. Акаккӑвӑн „Инкесем" йатлӑ кӗнеки малтанхисенҗен пӗри пулать. Кӗнекере „хӗрарӑм та арҫынпа танах' тенӗ шухӑша, тата йалта клас кӗрешӗвӗ ҫивӗҗленсе пынине лайӑхах кӑтартса панӑ.

**Җӑваш Кӗнеки Уйрӑмӗ.**

Ч-38464

Национальная библиотека Чувашской Республики

Проверено 09 ОКТ 2017

# ИНКЕСЕМ.

Улатимĕр арăмĕ аҫисемпе аптраса ҫитрĕ. Пĕрмайах ашкăнаҫҫĕ, куҫран вĕҫертмелли те ҫук. Кĕт пăрăнсанах мĕн те пулин туса хураҫҫĕ. Сăмахпа каласа та пăхат̆, тепĕр ҫух пиҫиххипех пĕҫертсе илет, ҫапах та пурпĕр усси ҫук.

Ак, пайан—хăй ирхине ĕне сума тухсан, тăхăр ҫулхи ывăлĕ—Пет̆т̆а ҫăланти хăма ҫине темшĕн хăпарса кайнă та, ыран-пайан уҫламалли икĕ сĕт куршакне пĕррех ҫĕрелле персе антарнă.

Тултанах илтрĕ Унеҫҫи инке темскер ўкнине—ҫупса кĕҫĕ ҫасрах. Пăхрĕ—вăл кĕриҫҫен пĕр урай турăхпа хăйма сарăлса выртат̆. Йăт ҫурипе кушак варне кĕрсе кайсах ланклаттараҫҫĕ турăха. Пет̆т̆а хăй кăмака ҫине хăпарса лăпҫăнса выртнă, ҫĕнсе те ҫĕнмест. А-ай, тарăхрĕ Унеҫҫи инке... Уринҫен туртса антарҫĕ те Пет̆т̆ана кăмака ҫинҫен, шăпăрпах ислетме тапратрĕ.

Хытă тарăхса карĕ ҫав, кашни кун мĕн те пулин сийенлеҫҫĕ-ске! Ҫылайах та тивертетҫĕ пуҫ вăл ывăлне, лап кўршĕ арăмĕ Марине инке пырса кĕҫĕ.

— А-ай-уй, Унеҫҫи... Мĕншĕн унашкалах хĕнен аҫана, ухмах пуҫ...—терĕ вăл, Унеҫҫине ҫасрах Пет̆т̆аран уйăрса.—Мĕн пулҫĕ?

— Ав, пăх, мĕн тунă вăл...—кăтартрĕ Унеҫҫи ҫăланалла.—Маннешкел шуйттан никамăн та ҫук пуҫ!..

Кашни кун, кашни кун мĕн те пулин сăтăр тăваççĕ!.. Ĕнер ак, хам шыв кӳме кайсан, кушакпа йытă çӳрине, иккĕшне мăйĕсенҗен кантрапа çыхса, лаптак каштаран çакнă, сулланса çех тăраççĕ... Виçĕмкун тата... Каллех, хам çук ҫух... Ваҥккăпа иккĕшне апат антарса хăвартăм та, хам, тем тума çав, тулалла тухрăм. Унҗен те пулмарĕ, апат çисе ларнă çĕртех иккĕш те пĕрпĕрине пуçĕсенҗен кашăксемпе пама тапратнă, ҫашкине ӳкерсе çĕмĕрнĕ... Çапла, шалт аптраса çитрĕм. Ман аҗасем пек путсĕрсем урăх çук та пуљ тетĕп, те ашшĕ çукран...

— Е-е, калаçатăн çав!.. терĕ Марине. —Аҗапăҗа пурте пĕрех вăл, ес ман аҗасем санҗен кайа тетни? Уса-ал, питĕ җарусăр... Ав, Кĕтерин те каларĕха. Ĕнер пырса ларҗĕ те... Ĕне карти хыçне ларнă тет те, җĕлĕм тивертме хăтланаççĕ, тет. Ара, тем тăвĕç, тем кăтартĕç... Хаљ авăнсем çапса пĕтернĕ, тырăсем шатах пуçтарса хунă. Пĕр усал пулса кайсан, җиперех ыйткаласа çӳреме кăларса йарĕç...

— Ы-ых, еп сана, есрелĕ!—йунарĕ Унеççи җăланалла тарса кĕрсе, макăрнипе сăмсине мăш-мăш турткаласа тăракан Петтине.—Тепре мĕн те пулин ту, еп сана урама кăларса ывăтăп, усал!

Аҗана җăлантан тĕккелесе кăларса йарса, хăй урайне тасатма тытăнҗĕ.

... Пӳрт умĕнҗи картлашкасем çиййĕпе хыттăн җупса хăпарса, пӳрте Унеççи инке акăшĕн хĕрĕ Варвари кĕҗĕ.

— Килех... Ирт тĕпелелле, лар çавăнта,—терĕ Унеççи инке.

— Ларсах тăмастăпха еп. Мана çатма кирлĕҗҗĕ те... Ай-уй, мĕн кунта сан? Урайне сĕтпе çăватним?—терĕ хирĕç Варвари, тĕпелелле пăхса.

— Петта унта турăх тинĕсĕ тунăха ун...—кулђĕ Марине.

— Темскер тăвĕç есрел ађисем...—терĕ Унеççи инке, пуçне çĕклесе.

— Хăвăр ађусене килте усратăр та... Шкула кайакан ађасем кĕнекепе аппаланаççĕ, санăн ĕççĕр аптраççĕ.

— Шкула еп те тем пекех йарасшăнђђĕ те... Мĕн тăвас тен, хĕл варринђе вĕсем уй урлă ăçтан çӳретђĕр? Тумтирĕсем çавнашкал... Хамăр йалта шкул пулсан аванђђĕ те, çук та... Мĕн тăвас.

— Йала пирĕн ђăнахах та шкул кирлĕ, Унеççи... терĕ Марине, киле кайма хатĕрленсе. Ађасем шкулта кун каççан—пире ђылайах çăмăл пулмалла. Хаљ вĕт пĕрмайах ураран çакăнаççĕ.

— Аванђђĕ те çав...

— Шак-шак-шак! тутарђĕç урам йенђи ђӳређерен. Кантăк витĕр Мирун муђин сарлака сухалĕ курăнђĕ.

— Кин, кин тетĕп! Пайан пуху! Ђасрах пухăнма хушрĕç, тух!—терĕ вăл.

— Мĕн пуххи?

— Мана каламаççĕ вĕт, еп пĕлместĕп...

— Йурĕ, халех кайап... терĕ те йулашкинђен Унеççи инке, урайне шăлса пĕтерсе, тумланма пуçларĕ.

Марине инкепе Варвари те тухса кайрĕç.

* * *

Пуху нумай тăсăлмарĕ, çитес тунтикун çатра касма каймалла тусанах, саланма пăхрĕç. Кирек хăçанхи пекех, Унеççи инке пайан та пухура нимĕн те калаçмасăрах, кăмака патĕнђи сак çинђе ларђĕ.

Анђах пайан темĕнле урăхла пулђĕ. Пуху тăршшĕпех шухăша кайса ларђĕ вăл. Пайан вăл каласшăн

пухура темĕскер. Каласшăн та, анҫах ăна хĕрарăм хăйусăрлăхĕ ҫарса тăрать.

Темиҫе хутҫен те сăмах хушма тăҫĕ, калас пекех... Ҫав вăхăтра лап сăмахĕ пыра пырса ларать...

— Макҫăм... Кўрхе, еп пĕр сăмах каласшăнҫĕ те... терĕ йулашкинҫен Унеҫҫи инке. Хăйĕн пиҫĕсем вут пек пĕҫерсе кайрĕҫ.

Сĕтел хушшинҫе ларакан йалсовет претҫетаттĕлĕ— Макҫăм, саланас пек тăракан халăха сĕтел ҫине ывҫăпа ҫапсах ҫарҫĕ.

— Тăхтăрха, Улатимĕр матки тем каласшăн!...

Пурте Унеҫҫи инке ҫинелле трук ҫаврăнса пăхрĕҫ. Пуҫ тутрине йусакаласа, вăл малалла тухса тăҫĕ.

— Еп нумай мар... мĕн...—терĕ ҫеҫ, сăмахсем каллах пыра ларҫĕҫ.

— Мĕн, кала тата ҫас-ҫас!—терĕ пĕрри, Унеҫҫи инке нимех те калайманнине кура.

— Йалта пирĕн шкул кирлĕ... Ытти йалсенҫе ав, аҫасем шатах шкула ҫўреҫҫĕ... Пирĕн ҫеҫ ҫуккă... Аҫасем ахалех йытăсем хыҫҫăн ҫупаҫҫĕ, ним усси те ҫук вĕсенҫен. Шкул пулсан—питĕ лайăх пулмалла. Халăхпа пĕр пулса, шкул тусан аванҫĕ те...

Хурал пўртĕнҫи халăх шавласа кайрĕ.

— Е-е, пустуй сăмахлан ҫав.

— Тем тумалла пуљ пит, шкулĕпе...

— Камăн ытлах вĕрентес килет—уй урлă та йарать, мĕн тата?...

— Пирĕн аттесем вĕренмесĕрех аван пурăннă...

— Пăххаљ ăна, мĕн тупса каларĕ...

— Ха-ха-ха!

— Каларĕ те!

Йалсовет пуҫлăхĕн халăха кăшкăрсах лăплантар-

малла пулђё. Малтан хăйусăрланса тăнă Унеççи инке хăйуллана та пуçларё.

— Мён кулмалли пур унта? Есёр ађăрсемшён пёртте куђанмастăр пулас! Шутласа пăхăрха лайăх-рах — хамăрашкалах ухмаха йулаççё вёт?! Кўршё йалёсене пăхăр—шатах вёренеççё, пирён çеç килте...

... Итлемерёç ăна. Пёрин хыççăн тепри тухса кайса пётрёç. Халăх хыçне йулса, Унеççи инке килелле çул тăршшёпех йалсовет претçетаттёлёпе тавлашса кайрё...

*
* *

Йал пуххинђе шкул пирки калаçнинђен, ăна паха-лас вырăнне —кулни, Унеççи инкен кăмăлне питех те пăтратрё. Киле çитсен те нумайђђен тарăхса ларђё.

— Пăх-ха çавсене!—тет хăйне хăй тарăхса Унеççи инке.—Вёреннё пёрешкел, айăкра мён пулни-иртнине асăрхамасăр пурăнма та... Хамăр нимён те пёлместпёр, тата ађасене те хамăрашкал хăварасшăн. Хађхи сама-нара вёренмен çын çыни вăл?

Ех, ахађ! Çав йалти карма çăварсемех хуплаççё çав пире! Тăхтаха... Арçынсемпе май килес çук, хёрарăмсемпе калаçас пуђ. Арçынсене мён вёсене?... Ађасемшён пёртте куђанни çук.

... Пёрикё кун иртрё. Унеççи инкен пуçёнђен шкул тăвасси тухмаст. Хăйён пек инкесемпе ђылай калаçрё вăл ун çинђен. Хёрарăмсем тапрана пуçларёç.

Пёр ирхине, çăл патёнђе Унеççи инке йалсовет претçетаттёлёпе курса калаçрё.

— Макçăм, пёрре хёрарăм пуххи тăварха, калаç-маллисем пур... Пёлтёрсем тукалаттăрђђё вёт? Кёçёр пухха пёрре.

— Ђăнах, пухас пуђ,—терĕ леш хирĕç.—Ĕнер хут та килђĕ, телекаткăсем суйлама хушаççĕ... Кĕçĕрех тăваймастпăрха, ыран каçхине ĕнтĕ...

— Йурĕ еппин, ыран каçхине...

Унеççи инке килелле утрĕ. Пуçра шухăшсем пăтранма пуçларĕç.

...Хĕрарăмсем те шкулшăн. Кирлех çав... Мĕн пулĕши?

* * *

Туллийех тулђĕç хĕрарăмсем тепĕр каçхине хурал пӳртне. Тепĕр ђух хĕрсем çеç пухăнаканђђĕ, пайан апла мар вара, инкесем те пурте пекех пухăннă.

Пуху йĕркине те кӳрсе çитерейменрĕ йалсовет претçетаттĕлĕ, Унеççи инке малалла тĕккеленсе тухрĕ.

— Ман... малтанах каласха,—терĕ. —Пуххине те еп пухтарнă пекех пулђĕ те...

Хĕрарăмсем шăпах пулђĕç. Унеççи инкен çăварĕнђен шăтарас пек пăхаççĕ.

— Еп нумай тытса тăмăп, —терĕ малалла Унеççи инке.—Арçынсемпе ĕç тухмарĕ те... Пĕркун калама тăрсан та, мăшкăласа пĕтерђĕç, путлĕн калаттармарĕç те.

— Кунта арçынсем çук ĕнтĕ, йара пар!.. терĕ кулкаласа, йалсовет претçетаттĕлĕ.

— Кунта хамăр кăна ĕнтĕ...—терĕç хĕрарăмсем те.

— Ара ађасемпе аптраса çитрĕмĕр вĕт, хĕрарăмсем!.. Ĕçсĕрех ђупса çӳреççĕ, ним тĕлĕ те çук. Кӳршĕ йалĕсем ађисене шкула çӳретеççĕ, пирĕн пур... килте сăтăр тăваççĕ çеç.

— Вăл ђăнах çав...

— Ним ĕç тума та çук...

— Çаплах вĕсене асăрха.. —шăкăлтатма тапратрĕç хĕрарăмсем.

— Ђимĕрха, калам!..—терĕ каллех Унеççи инке,— капла каланипе çеç нимĕн те пулмасӗ вăл. Пирĕн йалта шкул кирлĕ! Шкул пулсан—хамăра та çăмăлђђĕ, ађисем те хамăрашкал ухмаха йулмĕђђĕç!

— Шкулĕ кирлĕ те вăл...

— Çук та...

— Çуккине пĕлетпĕр ăна!—Унеççи инкен сасси хăпарма пуçларĕ.—Çук тесе тăрсан... Кам пире йантласа парĕ ĕнтĕ хаљ, хамăр тумасан?!

— Уй-уй, хĕрарăм пуççăн,—терĕ хыçалтан хăйусăр сас.

— Мĕн хĕрарăм пуççăн?—кăшкăрса siксе тăђĕ малти куккăрта ларакан Марине инке.—Хаљ хĕрарăмпа. арçынна пĕр тан теççĕ вĕт? Епĕр Унеççисемпе ђылай калаçкаланă ĕнтĕ ун пирки. Çапла шутлатпăр: Анаткасра, пуп пурăннă çурт ахалех йанраса ларат... Çавна илсе килсе лартмалла та—шкул пулђĕ те!

— Урăхла май килмест, тупата,—терĕ Унеççи инке,—ăна йусамалли те нумай мар вĕт! Çавна та тăваймастпăри?!. Пĕрре тапратса йариђђен çеç вăл ĕçе. Хамăрах турттаратпăр... Пулăшакансем те тупăнĕç. Ав, ахаљ ђух пирĕн йашкĕрĕмсем хăйсене кăмсамул теççĕ... Çавсене те ĕçлеттерес пулат, ахалех пурăнаççĕиç.

— Упăшкасене те ĕçлеттеретпĕр!—кăшкăрђĕ тепри.

— Ађасене епĕр пĕђђен туман вĕт!..

... Хĕрарăмсем хусканса кайрĕç. Пăртак тăхтасан кам мĕн каланине те ăнланмалла мар пулса çитрĕ

— Шкул кирлĕ!

— Кирлĕ!...

Аран лăплантарђĕ йалсовет претçетаттĕлĕ хĕрарăмсене.

— Ђарăнăрха кăштах!.. Еппин, сирĕн пурин те йалта шкул ларттарас килети?—терĕ.

— Кирлĕ пулмасăр тата?!

— Тем пекех пулĕҫҫĕ!..—кăшкăрҫĕҫ инкесем.

— Апла пулсан—итлĕр! Хĕрарăм пуххипе, шкул лартмалла, тесе ҫырăпăри?

— Тавай, ҫыр!

— Ĕҫе тытăнмасан пулмасть вăл!..

*
* *

Ҫылай вăхăт иртрĕ ку пуху хыççăн. Çанталăк та сивĕтме пуçларĕ. Çаралса кайнă йăвăççем тăлăххăн пуçĕсене сулкаласа тăраççĕ. Хĕрарăмсем те хăйсен кăнҫалисене пĕтерме пуçланă ĕнтĕ. Иртнĕ пухура ҫырнине çавăнтах района леçтернĕҫҫĕ, анҫах темшĕнçке çав, ҫас тăваймаççĕ унта ĕçсене... Кашни кунах кĕтеççĕ ответ килессе. Çук та çук.

Пĕрре, каçхине, Унеççи инке армана çĕр выртмалла кайма лаша кӳлсе тăратҫĕ.

Урам алăкĕнҫен йăпăрт йалсовет претçетаттĕлĕ кĕрсе тăҫĕ. Тути хăйĕн йăл та йăл кулать. Çывхарарах пырсан:

— Пултартăмăр вĕт, Унеççи...—терĕ.—Пайан ак анҫахрах хут килҫĕ... Райĕçтăвком пуп çуртне турттарса килме ирĕк панă...

— Ҫăнахи?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Унеççи инке.

— Мĕн куртăн ес мана суйма?.. Кĕçĕрех пуху пухса, ыран пăсма та кайатпăр ĕнтĕ, мĕн тата?..

Çăмăллансах кайрĕ Унеççи инке.

— Апла, ыран пӳрт пăсма каймалла пулсан, армана каймастăп та... Унта кайран та кайма пулĕ—тесе, лашине тăварса йаҫĕ.

*
* *

... Хĕвел те савăнать пулас пайан. Пĕртте кĕркуннехи пек мар. Пит аҫашшăн кулать вăл... Каçхине пухура

йышăннă пек, пайан ирех халăх Анаткаса çурт патне кайма хатĕрленме пуçларĕ. Пĕрин хыççăн тепри лашасем кӳлсе тухаççĕ.

Темĕнле васкасан та—Унеççи инке труках тухаймарĕ. Пĕҕҕен çыннăн çавнашкал-çке: выҕăх-ҕĕрлĕхне тирпейлемелле, аҕисене те çимелли хатĕрлесе хăвармалла... Ĕçсене пуçтаркаласан, лашине кӳлсе, Унеççи инке тăвалла вĕçтерҕĕ çеç. Анҕах тури куккăралла кĕтеспе пăрăнаҕҕĕ вăл, сасартăк хăлхана хĕрарăм çухăрни кĕрсе кайрĕ... Пăхрĕ—Лутра Савинăн килхушши алăкĕ уçă, пӳрт алăкĕ умĕнҕе лаша кӳлнипе тăрат, çавăнтах Савин хăйĕн арăмне упалентерет кăна... Куна курсан, Унеççи инке трук тарăхнипе кăшкăрса йаҕĕ:

— Мĕншĕн хĕнет? арăмна, есремет?!..

Пăхмарĕ те Унеççи инке çине Савин, арăмне каллех тапкăпа йăвантарма пуçларĕ.

Ҕăтаймарĕ Унеççи инке, урапи çинҕен сиксе анса ҕасрах Савин маткине çăлма ҕупрĕ.

— Ма хĕнен?—терĕ вăл, ăна Савинран айаккалла пăрса илсен.

— Еп... Анаткаса кайма... лаша кӳлтĕм те...—терĕ Унеççи инкене Савин арăмĕ, арканса кайнă çӳçĕсене пуçтарса.

Унеççи инке лаҕ! сурҕĕ.

— Намăссăр, кĕççе пит,—терĕ вăл.—Мĕн, сан аҕусем вĕренес çуким, е? Ех, путсĕр, путсĕр! Хăвнаҕҕĕ сана пĕриккĕ туртас çак пушăпа!

— Мĕн тăвас тен... Пайан ирех таçта ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те...—терĕ Савин арăмĕ.

— Аҭа, лар урапу çине, кайăпăр, терĕ те Унеççи инке Савин арăмне, аллинҕи пушипе Савин лашине пĕриккĕ тивертсе, пĕр самантрах урамалла вĕçтерсе тухрĕ.

Кăсем хыççăн Савин та сиксе тухрĕ. Ђышкипе йунаса, хытă кăшкăрђĕ:

— Пăтошти еп сана, киле таврăнăн!..

— Епĕр сана хăвна пăтошти ак, тыткалăпăр! —кăшкăрђĕ Унеççи инке ăна хирĕç, пушă аврипе йунаса. Хăйĕн урапи çине ђупса пырса ларса, лашине хăвалама тытăнђĕ.

... Вĕсем Анаткаса çитнĕ çĕре, пуп çурђĕн тăррине пăсса антарнă та. Мађђа çинђе темиçен çавăрттараççĕ кăна. Айалта—пĕрисем тимĕрсене айаккалла йăтса кайса, лавсем çине тийеççĕ, теприсем каштасене, пĕренесене туртаççĕ...

Калаçу, кулă... Пĕри те ĕççĕр тăни çук.

... Икшер те хутлаймарĕç хăшĕсем; пуп çурђĕ кўрĕнсе те çитрĕ. Йулашки пĕренесене пырса тăксан та, халăх килĕсенелле труках саланмарĕ. Ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса тăнă; сăмах-йумаха шĕкĕлђеççĕ. Хăшĕсем лашисене те киле леçмен.

Сасартăк комсомол Хвеђук çухăрса йани пурне те шартах сиктерђĕ.

— Пухăнăрха пĕр çĕрелле, е-е-ей!..—кăшкăрђĕ вăл.

— Мĕн тума?

— Ма?..—терĕç сасăсем.

— Кирлĕ тата, вот ма!

Хвеђук кăшкăрнипе халăх ђăнах та ун патнелле туртăнђĕ.

— Акă мĕн,—терĕ йалсовет претçетаттĕлĕ, пĕренесем çине çўлерех хăпарса.—Çакăнта ларнă çĕртех епĕр шутларăмăр та, шкул туса çитерме пире çĕр тенке йахăн кирлĕ пулаđ. Ку укçана епĕр ниçтан та илейрес çук, çавăнпа та...

— Килрен, йатак тăрăх пухас!..—кăшкăрђĕ Унеççи инке халăх хушшинђен, Макçăм каласа пĕтериђђенех.

— Халех пухма тытăнас!..—терĕ тепри.

— Епĕр çапла шутларăмăр,—терĕ малалла Макçăм.— Итлĕр ак: пирĕн йалта йалхуçалăх налокĕ тӳлемен ђухăнсемсĕр пуçне те 350 йатак ытла, кашнинђен 6-шар кĕренкке ыраш пухас та, вăл 50 пăт ытла пулат̆, çитейменнине копператтивпа пулăшкома çитерсе пама ыйтас!.. Килĕшетри çакăнпа?

— Аван!.. кăшкăрђĕç халăх хушшинђен темиçен трук.

— Тавай, çаплах тăватпăр!..

— Пухас!

— Кĕрхи вăйпа вăл тыră нимĕн те мар!..

... Питĕ хапăл туса йышăнђĕç кăна. Хирĕçекенсем вуçех пулмарĕç. Çавăнтах урамсем тăрăх тыră пухма çынсем уйăрђĕç, анатри урама пухма Маринепе Унеç-çине хушрĕç...

Кун хыççăн вара ĕçсем хăйсен ђеређĕпех пыђĕç. Пĕр ерне хушшинђех пĕтĕм тыră пухăнђĕ, ăна пилĕк-улт лавпа патшалăха кайса сутрĕç. Пулăшком 25 тенкĕ, копператтив 45 тенкĕ пађĕ. Çĕрнĕ никĕссем вырăнне çĕнĕ йуман кĕрешсем туйаннă, унтан вара пӳрте пу-хăнса купаласа, мăкласа лартрĕç...

Пĕрик ерне хушшинђе шкул çурђĕ пĕтĕмпех пулса çитрĕ.

*
* *

Çакăнтан вара лăп çулталăк иртрĕ. Нумай улшăну-сем пулђĕç пĕр çул хушшинђе... Пĕр тĕттĕм, кĕрхи каç, хăйĕн пӳртĕнђе кăнђала пĕтĕрсе ларакан Унеççи инке, сĕтел хушшинђе хутсемпе тăрмашакан Пет̆т̆и çине пăхса илсе, пулни-иртнине пĕтĕмпех аса илђĕ.

...Тăрăшмасан пулмас̆т çав нимĕнле ĕç те... Хĕр-арăмсем пуçласа йанипе йалта шкул пулђĕ-пулђех...

Аҫапăҫа та ахаљ ҫупмаст... Пурте вĕренеҫҫĕ. Кăнтăрла та, каҫ та шкулта. Петта, ав, хаљ кĕнекесемпе тăрмашат, тепĕр ҫух Унеҫҫи инкене те кирек-мĕн, вăраххăн пулин те, вуласа парат... Виҫĕмкун „Капкăн“ вуласа, вар хытса лариҫҫенех култарҫĕ, мур илешши...

Аҫисем кăна мар, тата!.. пысăккисем те... Пысăккисемт е вĕренеҫҫĕ вĕт! Унеҫҫи инке хăй те ернере виҫ хутҫен шкула, каҫпа кайса вĕренет... Ҫиперех саспаллисене уйăрма вĕренҫĕ!

— Ал пусма пĕлсен те тем хаках!—тет вăл хăйне хăй...

Кăҫал килнĕ ҫамрăк ҫăваш хĕрĕ—уҫиттĕлнитсă инкесене ҫунтанах тăрăшса вĕрентет, пĕтĕм вăйне хурат инкесемшĕн...

Йалта шкул пурри йал ҫыннисемшĕн пит пысăк савăнăҫ!..

---

Пирĕн калав пĕтрĕ. Хăшĕсем кунта ҫырнине ĕненмелле мар та, тейĕҫ. Ҫук, апла мар вăл. Ак, сăмахран: Хурамалăх йалĕнҫе (Йетĕрне районĕ) хĕрарăмсем тапратса йанипех 1928-мĕш ҫулта ҫĕнĕ шкул туса лартнă. Унта та малтан аҫасем нумайĕш вĕренмесĕр йулнă, ахаљ ҫупса ҫӳренĕ. Хаљ ĕнтĕ аҫасем пурте вĕренеҫҫĕ. Вĕсемсĕр пуҫне тата ваттисем те вĕренеҫҫĕ. Вĕсем вĕренӳн уссине пит те аван пĕлнĕ ҫав. Ăна пурин те пĕлес пулат.

— Вĕренни—ҫутă! тенине ан манăр, инкесем...

# ТИНЕХ МĂШКĂЛАЙМĔÇ.

Утнă çĕртех тутрине çыхса, Маруç урама тухрĕ те, йĕри-тавралла пăхса илчĕ.

... Тĕттĕм. Сивĕ. Пӳрт умĕнчи çаралса кайнă хурăн тураттисене сив çил туллать. Инçетрен, Сăрă шывĕ йенчен йăвăр, хура пĕлĕтсем кĕç-вĕç çĕр çине татăлса анас пек шуса килеççĕ...

Кичем. Сивĕ...

Пĕр минут пек хăйсен хапхи патĕнче тăрсан, Маруç васкаса аналалла авăнакан урампа утрĕ. Лере, Йакку мучин йăмрисем айĕнче, каскасем. Вĕсен тĕлнерех çитсен, ăна трук палланă сас чĕнсе илчĕ:

— Маруç!

— Ай?—терĕ хирĕç Маруç.—Кам... Ваççа-и?

— Епĕ, епĕ... Кил часрах.

Маруçа Ваççа каскасем çинче кĕтет мĕн. Хăй хуллен чĕлĕм мăкăрлантарать.

— Ма час килмерĕн?—ыйтрĕ Ваççа, Маруçа хăйĕн çумнелле сулăнтарса.—Хăв чĕнтĕн те, хăвах улталатăн.

— Йерçӳ пулмарĕ...—терĕ Маруç.

— Тем ĕçлерĕн пулĕ ĕнтĕ...

Пăртак калаçкаласанах, темшĕн, сăмах пĕтрĕ. Маруçа хăйĕн çумнерех туртса, аллисене Ваççа унăн кăкрисем çине хучĕ. Пăчăртарĕ...

— Ан тивха, кай,—терĕ трук Маруç.—Йар... Кай! Ан пăчăрта тетĕп сана... Йар!

Тĕлĕнсе пăхрĕ Маруç çине Ваççа.

— Мĕн пулҫе сана? Хăв ҫĕнетĕн вĕт?.. Măн пуç-ланса карăним...

Хăй каллех Маруçа тыгма тăҫĕ, анҫах Маруç каллех аллисенҫен тытрĕ.

Ваççа кăмăлĕ хуçăлма пуçларĕ.

— Е-е... Апла еппин... Йурат ара... Ай, такам урăх-хи аса килҫĕим?

„Урăххи" тесен, Маруç ҫĕри кăртах сикрĕ. Хитре çаврака пуçĕ айалалла усăнҫĕ.

... Ах, каламаллах Маруçăн пĕр сăмах... Çавăнпа тухнă та вăл урама. Пайан кăна мар, ернипех шутланă Маруç ун çинҫен...

— Мĕн çăварна çăмах хыпнă пек ларатăн?—терĕ Ваççа каллех.

Маруç хирĕç ҫĕнменнипе вăл та урăх шарламарĕ. Хăйĕн куçĕ умĕнҫе—хура куçлă, йаршам кĕлеткеллĕ кўршĕ хĕрĕ Нинă. Ак вăл, кĕрен саппунпа, шур шу-пăрпа. Тутисем кулнипе çу пек ирĕлеççĕ, хулпуç-çийĕсем лăканаççĕ... Ех, илемлĕ, хăйамат!..

... Кассăн шăхăрса пынă çил вата йăмрасене авса, ҫўхесе илҫĕ. Çилпе пĕрле тахăш тĕлте хуралçă хăйĕн патакĕсемпе шакканă сас илтĕнсе çухалҫĕ.

— Ваççа...—терĕ шăппăн Маруç.

— Ну, мĕн? Ну, калаçам тата.

Ваççа — кăмăлĕ пăсăлнă пирки, Маруç каллех иккеленҫĕ. Каласи, калас мари?

— Нинăна... ес... мĕн каланă? — ыйтрĕ хуллен, ҫылайҫҫен ҫĕнмен хыççăн. — Ес...

— Мĕн еп? — терĕ Ваççа. — Мĕн, сан мана ҫарма шухăшу пурим?

Лаҫ! сурҫĕ.

— Вара... Еп тата?

— А ес мĕн? Анне штоҍ? Еккей, аҍам...

Калас сăмах пыра ланкрĕ: ҍĕнеймерĕ Маруç нимĕн те. Хăйĕн куçĕсем айаккалла пăрăннă, Ваççан шăтарма хăтланаççĕ.

Ваççа трук ура çине тăҍĕ.

— Кайас...—терĕ те, анаталла уттарах паҍĕ.

Маруç та сиксе тăҍĕ. Хыççăн икĕ утăм йарса пусса:

— Ваççа, Ваççа!.. Тăхтаха, ан кай!.. Пĕр сăмах каламаллаҍҍĕ!—тесе кăшкăрҍĕ ҍĕтрекен сасăпа. Анҍах лешĕ ҍĕнмерĕ. Тĕттĕмре вăл хыттăн утса кайни кăна илтĕнҍĕ. Маруç Ваççа ури сассисем илтĕнми пулиҍ-ҍенех анаталла пăхса тăҍĕ...

— Пĕтрĕм еппин... Пĕтрĕм...—терĕ хăй ăшĕнҍе.

*
* *

... Çук, килмест ыйхă. Çывăраймасť Маруç. Пĕр йенҍен тепĕр йенне çавăрнаť, çиттипе пуçĕ çинҍенех витĕнсе пăхаť... Пулмасť. Шухăшĕсем... Шухăшсем пуçра туй тăваççĕ.

... Ăçтан çывăран? Ак, пайан кун каçкаланă, ыран тем пулаťха. Ах, Ваççа!.. Çук, пулмарĕ, пăрахрĕ вăл хаҍ Маруçа, вăл хаҍ Нинăпа туслашнă.

Ĕнер Верук пĕлтерҍĕ Маруçа, Нинă ĕнесем патĕнҍе ахăлтатсах Ваççа премĕксем çитерни çинҍен каласа кăтартаť тет... Ҍăнах ĕнтĕ... Ваççа хăй те: „сана мĕн ĕç, мана ҍарма шухăшу пурим?“ —терĕ... Пĕтрĕ ĕнтĕ пурăнăç!... Ак, атте пĕлсен... йалйыш... хурăнташсем?

Шухăшланипе пăҍăланса çитнĕ Маруç çиттийе хăйĕн çинҍен сирсе йаҍĕ. Пўртре шăп... Кăмака хыçĕнҍе çеç çывăрма маннă шăрҍăк ҍăрклатаť те, тăрпара çил макăраť...

4-38464
Национальная библиотека Чувашской
2344

Шухӑшсем каллех Маруҫ пуҫне ҫиме пуҫларӗҫ... Ҫуркуннеҫҫӗ ун ҫух. Вӑрманта ӗнесем ҫитернӗ ҫӗрте... Ӑшӑ каҫ... Вӑрман хӗрсен йурриле йанрать. Ҫырмаран хӑпаракан сукмак хӗррингҫе тем-тем каласа та аҫаш-ларӗ Ваҫҫа.

Йурататӑп... Каҫҫа илетӗп... Пӗрле пурӑнӑпӑр... ӗмӗр-ӗмӗр... терӗ. Аванҫҫӗ ун ҫух Ваҫҫа. Маруҫ та ӑна хытӑ йуратнӑ.. Ҫавӑн ҫух, ҫавӑн ҫух пулҫӗ ҫав!.. Ак хаљ—Ваҫҫа урӑххи патне кайать. Маруҫ ӑна тек кирлӗ мар. Ах, мӗн тӑвасха ӗнтӗ?

Иртнӗ кӗҫнерникун... Маруҫ хӑйӗн кӑкри айӗнҫе Ваҫҫа аҫийӗ хусканнине сисрӗ. Маруҫӑн анне пулмал-ла.. Вунтӑххӑрта!.. Ваҫҫа хӑй ӑна пӗлместха, Маруҫ ӑна каласшӑнҫҫӗ, кӗҫӗр хӑйех урама тухма ҫӗннӗ, ан-ҫах хӗрӗн хӑйуллӑхӗ ҫитмерӗ, ҫавӑнпа та калаймарӗ... Мӗнле калас? Ӑна каласан—вара вӑл вуҫех пӑхми пу-лӗ те... Ей-йай-ай!.. Мӗн тӑвас хаљ! Мӗскӗн пуҫа ӑҫта ҫикес?

*
* *

Ирхине Маруҫ пиҫӗ—катанпир тутӑр пекех шап шур. Каллах ӑшра аҫа хусканнине сисрӗ. Вилес пек хӑрарӗ Маруҫ...

... Ҫырмари ҫӑл патӗнҫе шыв ӑсса тӑнӑ ҫух лапах ҫырман тепӗр йенҫен Ваҫҫа лаша шӑварма утланса анҫӗ.

Пӗрпӗрне пӗр сӑмах ҫӗнмесӗрех куҫӗсемпе йӗплесе илҫӗҫ. Маруҫ ҫӗри кӑрӑнтлатса тапма пуҫларӗ. Ак ӗнтӗ, ак... Калать вӑл хаљ Ваҫҫана. Пӗтӗмпех, пӗтӗмпех...

— Ваҫҫа!

— Мӗн? Еп Ваҫҫине пурте пӗлеҫҫӗ... Ҫирӗм пӗр ҫул Ваҫҫа еп...

— Кулса каламаççĕ сана,—терĕ Маруç шыв кĕвентине туйа пек тытса.—Çĕрккаç манран тартăн,—хаљ...

— Ну, мĕн халĕ? Ес мана... хăратасшăним? Пĕрикĕ хутђен пыра ларнă сăмахсене çăтса, Маруç трук персе йађĕ:

— Манăн... хырăм пур.

Анђах ку сăмахсенђен хăй хăраса карĕ. Кăкăр темле пăђăртанса ларђĕ... Маруç сăмахĕсем Ваççана çиçĕм пек çитсе çапрĕç...

— Мĕн, мĕн? Кам ађи? Мĕнле хырăм?—тесе кăшкăрса йађĕ те, куçĕсене çутăлтарса Маруç умне сиксе пыђĕ.

— Кăмпа турăн? Хаљ... Ман çине калама шухăшу пури?

Ваçça çав тери пустуй калаçнипе, Маруç та, хăраса кайнă пулин те, ђăтаймарĕ, антăхса кайас пек калаçма тытăнђĕ.

— Мĕн... мĕн, тунма шухăшу пурим? Хăвăн ађуна йышăнас мар тетним?... Мĕн... ман çийе шуйттан çине пăхнă пек пăхатăн?

— Ђăп, ан лăрка!—кăшкăрса йађĕ Ваçça.

— Ан лăрка мар унта... Ай, хаљ урăххи пур та, еп тек кирлĕ марим? Астумастăни ху мĕн каланисене? Кађђа илеп терĕн вĕт? Еп те çын, ма ес мана намăс кăтартатăн.

Анђах Маруç каласа пĕтереймерĕ, Ваçça трук ђупса пырĕнђен пăвса тытрĕ те, пĕррех шăннă тăм çине пеђĕ...

— Ссук-кка! На сана!

Тапрĕ, ђышрĕ, ура çине тăма тăрсан каллах ђышса ÿкерђĕ.

— Ай-ай-а-а-ааа...—çухăрса йађĕ Маруç.

— Ађам, ађам!

— Вaççа!.. тесе кăшкăрнисем трук Ваççа хăлхине кĕрсе карĕç. Пăхрĕ—сăртран çăл патнелле икĕ хĕрарăм анаççĕ... Йăпăр-йапăр лаши çине утланҕĕ те — кил йенелле вăштах хăпарса тарҕĕ.

Kaçҕен кун çинҕен çур йал ытла пĕлнĕ те... Маруç шыв патне аннă хĕрарăмсене тархаслană, лешсем темшĕн ҕăтайман, сăмах сарнă...

* * *

Тĕттĕмленнĕ ҕух Маруççем патне унăн йулташĕ, телекаткă Верук ҕупса пырса, тӳрех Маруç ăçтине ыйтрĕ.

— Анҕахрах пӳртреҕҕĕ... Тулалла тухрĕ пулас... терĕ ăна хирĕç вуҕах умĕнҕе тăрмашакан амăшĕ. — Урамра курăнмарĕи? Анҕах, анҕах тухрĕ... Тем, пайан пуç ыратать текелетҕĕ те... Кил хушшинелле пăхха.

Питĕ тарăхнă Верук пайан ирхине Маруçпа аван мар пулнине илтсен, мĕншĕн тесен вăл хăй те арçынтан мăшкăл тӳссе курнă. Çавăнпа та халҕ йаланах йалти хĕрарăмсене хӳтĕлет, сăмахпа та, ĕçре те пулăшать хуйхă-суйхă пулсан.

Кил хушшинҕе Верук пур çĕрелле те пăхкаларĕ. Çук Маруç. Ҕупса пырса нӳхреп çийĕ алăкĕнҕен туртса пăхрĕ. Шалтан çаклатнă, уçăлмасть. Верук ҕĕри темскере сиснĕ пек тапма пуçларĕ темшĕн... Вăйпа тапса туртрĕ те, алăк карах уçăлса карĕ.

Трук... Верук ласт! сапур йупи çумнелле сулăнса карĕ.

Маруç каштаран вĕренпе çакăннă, пĕтĕрĕнкелесе тăрать.

— А-а-а! Ай-у-уй! Петĕр пиҕҕе-ей!..—çухăрса йаҕĕ Верук. Кил хушшинелле тухакан ҕӳреҕерен шаккаса, пĕтĕм ăшҕикпе çухăрса, ҕасрах тухма ҕĕнҕĕ...

... Кив кипке пек лăнҫăркаланса кайнă Маруҫа пӳрте йăтса кĕртрĕҫ.

* * *

Маруҫ ир йенне тин ăса кĕҫĕ.

Кайран вара куҫҫуҫ витĕр пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ. Тахҫанҫҫен лăплантарса ларҫĕ ăна Верук ҫăланта. Хĕрĕ кунашкал пулнăшăн Маруҫ ашшĕ пысăк хуйха ӳкрĕ.

— Еп... Ҫав Ваҫҫасен аслашшĕ патĕнҫе ҫирĕм ҫула ҫитиҫҫен тарҫăра пуранна... Е-ей, мĕн ҫухлĕ тӳсрĕм пуҫ мăнтарăн! Ак хаҫ—каллах... Вĕсемех мăшкăлаҫҫĕ... тет вăл, ик аллипе пуҫне ҫавăрса тытса.

Ҫăлантан кăна илтсе Верук тухрĕ.

— Ан хуйхăр, Ҫемен пиҫҫе... Кăна епĕр ҫапах ахаҫ ирттерместпĕр... Ҫитĕ кун ҫухлĕ мăшкăланипе те,— терĕ вăл Маруҫ ашшĕ патнелле пырса.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ вĕсене...

— Мĕн тăвăпăр мар, Ҫемен пиҫҫе! Хаҫхи самана ĕлĕкхи мар, хаҫ хĕрарăмран мăшкăлаттармаҫҫĕ, аҫам... Маруҫа туҫккă ес ан тив... Айăплă мар вăл кунта...

...Тепĕр кунне Маруҫ ҫакăнма тăни ҫинҫен пурте пĕлнĕ. Ăҫта ҫитнĕ унта ҫавăн ҫинҫен шĕкĕлҫеҫҫĕ.

Верук каллах Маруҫ патĕнҫе. Унпа пĕрле Нинă Мата пынă. Виҫҫĕш калаҫса ларнă ҫух, Ваҫҫа ашшĕ Маруҫсем патнелле пынине курах кайрĕҫ.

— Мĕншĕн килетшиха ку?—терĕ Верук.—Ăтăрха, ҫăланалла пăрăнăпăр епĕр. Ăтăр, ăтăр...

Ехлетсе, ĕсĕркелесе кĕҫĕ пӳрте Ваҫҫа ашшĕ. Маруҫ ашшĕне ал парса, кĕтесселле сăхсăхса илҫĕ.

Малтан унталла-кунталла, ҫанталăк ҫинҫен калаҫăт... Унтан Маруҫ ашшĕ ҫумнерех ларса:

— Еп санпа, Çемен хăта... çав аҫасем пирки калаçма килтĕм... Кхе, кхе.. Ара, тем хăтланĕç халҫхи аҫапăҫа. Ним тума та çук ĕнтĕ...

Маруç ашшĕ нимех те каламарĕ. Ҫăланта хĕрсем сывламасăр тенĕ пек итлесе лараççĕ.

Ĕсĕркелесе, Ваççа ашшĕ каллах сăмах хускатса йаҫĕ.

— Йут çынсемех мар, Çемен хăта... ĕçе таçталла йариҫҫен... Ме, çын куриҫҫен вун тенкĕ те, пăртак ĕçĕпĕр... Тепĕр ҫух та манмăпăр ара... Кхе, кхе...

— Мĕн хăтланан, намăссăр!—кăшкăрса ҫупса тухрĕ ҫăлантан Верук.—Çемен пиҫҫе, ан калаç çак путсĕрпе... Хĕрсем, тухăрха, пĕçертер çакна...

Ҫăлантан Маруçпа Нинă та тухрĕç.

— Укçапа йăйăр илме пулат, çынна укçалла сутмаççĕ!—кастарма тапратрĕ Верук.—Пур пуйансем те путсĕр, есĕ те çак картаранах... Кĕççе пит! Еккей, укçаллă пулнă та, тем тусан та каçармалла?!

Ваççа ашшĕн куçĕсем çап-çутă пулса кайрĕç. Ним те ҫĕнеймест! Маруç та хăйуланса, ун патнелле пыҫĕ те:

— Тухса кай ман атте киленҫен!—терĕ хыттăн.— Укçалла ывăлна тир тума кайса сут, пире укçалла сутмаççĕ! Тух тенĕ сана, кай!

— Е-е-й, намăса пĕлменскерсем! Çук ĕнтĕ, санăн Ваççу пеккисем хĕрарăмран тек мăшкăлаймĕç... Çук! Иртрĕ вăл! Акă, тăхтаха, сут мĕн тăвĕ... Тухса кай, кĕççе пит!—çаптарат Верук.

Хирĕç темĕскер калама тăнă Ваççа ашшĕне хĕрсем тĕккелесех кăларса йаҫĕç. Алăкран тухсан тин сăмах хушма хăйрĕ вăл.

— Капла хăтланаттăр пулсан, йăтă хўри те кураймăрха пирĕнрен...—терĕ.

— Ан лӑрка, курӑн ак, хӑвӑра йӑтӑ хӳри ан кӑтарт-ҍӑр! — кӑшкӑрҍĕ хыçалтан Верук. Тинех мӑшкӑлай-мӑрха!.. Пшол, пĕрхĕн кунтан!

* * *

Иртнĕ çуркунне епĕ Маруçпа Верука хулана кайнӑ ҍух хирĕç пултӑм. Алӑ парсанах, епĕ вĕсем çинҍен ыйтса пĕлме тытӑнтӑм. Кайран мĕн пулнине манӑн питĕ пĕлес килетҍĕ.

— Е-е, хытӑ йӑсларĕç йалта! — терĕ Верук. Тепĕр кунах епĕр сута патӑмӑр... Хайскер Ваççан ашшĕ кӑсем патне (Верук пуçĕпе Маруç çине кӑтартрĕ) кунне виççĕ-тӑваттӑ çурачасшӑн ҍупма пуçланӑ.. Вара... мĕн тунӑҍҍĕха есĕ ӑна?..

Маруç ывçи ӑшне кулса илҍĕ.

— Еп çелнĕк урайĕ шӑлаттӑм... Ваççа пырса кĕҍĕ те, тӳрех ҍĕрпуççи çине ларҍĕ. Каçар, каҍҍа илетĕп, каçар, тет... Пӑхкаласа тӑтӑм-тӑтӑм та... Шӑпӑрпа пуç урлӑ пĕрех йатӑм... Тухса тарни курӑнмарĕ!..

Пурте кулса йатӑмӑр.

— Ну, ну, малалла? — терĕм еп...

— Сут тума йалах пыҍĕç... Хĕрарӑм пайĕнҍен пыҍĕç. Малтан хĕрарӑмсен пуххинҍе нумай каласа кӑтартрĕ. Тем, тем унта... Арçынсем шат тĕлĕннĕ. Хĕрарӑмсене ытла ирĕк нумай панӑ теççĕ...

— Кайран сут пулҍĕ... Икĕ çул хушши тĕрмере лар-малла турĕç. Хаҍ те таврӑнманха, лараŭ... Вӑт, урӑх нимех те çук...

— Ну, тата хаҍ мĕнле пурӑнкалаттӑрха?

— Пĕлтĕр кĕркунне пирĕн йалта малокрамӑтнӑйсен шкулĕ уçрĕç... Çакӑнта иксĕмĕр те çӳрерĕмĕр, — терĕ Верук. Малтан кулаҍҍĕç ваттисем... Епĕр пĕтĕмпе те

çиђĕ хĕрарăм кăна çӳренĕ те... Кайран кулни таçта кайса кĕђĕ вара...

— Пирĕн хĕрсем писсăра тухасшăн, тетђĕç малтан...

— Мĕнле, çӳренин усси пулђĕи?

Верукпа Маруç пĕрпĕрин çине пăхса илђĕç.

— Пулђĕ пулмалла кăштах...

— Тата мĕн пур лайăххи сирĕн патăрта? Ăçта кайрăрха пайан?

— Хулана карăмăр...—терĕ Маруç.—Верука совет претçетаттĕлĕ тунă вĕт кăçал...

— Ђăнахи?

— Ђăнах пулмасăр тата...

— Маруç та ђынлă хаљ... Кайăк-кĕшĕк йулташлă-хĕн старăсти...—терĕ Верук.

— Хулана мĕн, ĕçпе карăри?

— Еп Райĕçтăвкома формалин пирки, Маруç та акроном патне пыђĕ... Ĕçлĕ çынсем мари, ара... Хе-хе-хе... Леш Ваççа таврашĕсене сутă тунăшăн сас-сăр хăвартăмăр та кăçал хаљ палăрмаççĕ питех.

— Аван, аван...

— Çул çӳренĕ ђух кĕрсе тух,—терĕ йулашкинђен, уйăрăлас умĕн мана.—Ĕлĕкхи мар хаљ... Хамăр хуçа.

— Йурĕ,— терĕм еп, вĕсенђен уйăрăлса.

Кайран, пĕђђен утнă ђух, тахçанђђен вĕсем çинђен шухăша кайса пытăм.

... Кун пек историсем ђылай пулаççĕ. Нумайĕшĕсем хаљ те хĕрарăма çын вырăнне хурасшăн мар, анђах хĕрарăм арçынтан кайа пĕр утăм та йулмасť, вăл хăйĕн çулĕ çинђи тумхахсене сирсех малалла утаť, çĕнĕ, сутă тĕнђе тăвассишĕн ĕçлет...

---

# ЁНЕНҪЁҪ.

1.

Пухуран Васса питӗ ыванса таварӑнҫӗ. Пуҫ йавӑр, хушӑран ыратнӑ пек, пӗтӗм шӑмшак темле сӑркӑлтатӑ...

— Апат ҫийетни?—ыйтрӗ амӑшӗ.

— Кирлӗ мар,—терӗ ӑна хирӗҫ Васса, аллинҫи хутсене лаптак кашта ҫине хурса.—Ҫывӑрас килет. Ыран ирех вӑрат, тен тӑраймӑп. Каймалла.

— Ӑҫта?

— „Ҫӑлтӑр" колхоса.

— Мӗн тума? Камсемпе?

— Курма. Хӗрарӑмсемпе, пӗр улттӑн-ҫиҫҫӗн...

Анасласа илҫӗ те, саланкаласа, кутнӗк сакки ҫине ҫывӑрма выртрӗ.

...Ҫак кунсенҫе унӑн лайӑххӑн ҫини те, ҫывӑрни те пулман. Ӗҫ ҫав тери нумай... Нихӑшне туса ҫитерме ҫук. Пӗр ӗҫ хыҫҫӑн тепри тухса пыратӑ. Хытӑ ӗшентерет тепӗр ҫух! Ҫапах та, кирек мӗнле пулсан та, пурне те туса пымалла, халӑх ӗҫлессе шанса претҫетаттӗле суйланӑ вӗт.

Йулашки виҫ-тӑват кун хушшинҫе пушшех йавӑр килҫӗ. Кашни каҫ пуху... Пысӑк ӗҫ тапратса йанӑ—ҫаплӑ ӗҫ. Йалти ҫухӑнсене пӗрлештерсе колхос тӑвасшӑн. Пӗлтӗрех пуҫланӑ кӑна комсомолӗссем, анҫах нимӗн те трук пулмасӑ. Хӗл иртрӗ, ҫуркунне пулҫӗ, ыраш вырмалли вӑхӑт та ҫитрӗ. Хаҫ ак ҫӗнӗрен пуҫ-

ласа йанӑ. Ыран-пайан йала мишевейсем килеҫҫӗ, ҫавӑнђен туса ҫитерес пулат̆.

Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ӗҫе пит хӗрӳллӗ тытӑннӑ. Кашни каҫ, кашни каҫ пуху...

Ӗнер кӑнтӑрлапа пуҫласа тӗттӗмђен йӑсланӑ хыҫҫӑн, колхос тума ҫирӗм виҫҫӗ ҫырӑнђӗҫ. Ӗҫ пулсах ҫитет тенӗђђӗ, анђах... тепӗр ђӑрмав сиксе тухрӗ. Пысӑк ђӑрмав — ҫырӑннӑ ҫынсен арӑмӗсем пурте хирӗҫ. Нимӗн тусан та колхос йӗркисене йышӑнасшӑн мар.

— Тем пулсан та йалтан уйӑрлмастпӑр...

— Атте-аннесем унсӑрах пурӑннӑ...

— Колхосра пӗрисем ӗҫлемелле те, теприсем хӑйаккӑн ҫеҫ выртмалла...

— Тур пулӑшмасан ҫапах ыр курас ҫук!

Ҫапла хӑйӑрнӑ хӗрарӑмсем упӑшкисене. Арӑмсем ытла хирӗҫнӗ пиркийех ӗнер колхоса ҫырӑннисем темиҫе ҫын пайан Васса патне пырса йађӗсене хураттарнӑ.

Ӑнланайманнипе пӑтранса кайнӑ хӗрарӑмсене вӑхӑтра плӑплантармасан пуҫланӑ ӗҫ пӗтӗмпех саланса каймаултарнӑ. Ун ҫинђен комсомолӗссем те, Васса хӑй те аван пӗлнӗ.

— Ку таранђђен пӗр ӗҫе те вӗҫне ҫитермесӗр пӑрахманђђӗ, кӑна та йепле те пулин тусах ҫитерес пулат̆...—тенӗ вӗсем.

Пайан кӑнтӑрла иртсен хӗрарӑмсене пухнӑ. Колхос туни мӗн тери аваннине, пӗрлешсе пурӑнсан ҫеҫ хађхи хӗсӗк пурнӑҫран илемлӗ, ҫителӗклӗ, ҫӗнӗ пурнӑҫ тума май пуррине ӑнлантарма тӑрӑшнӑ...

Ҫапах та хӗрарӑмсем килӗшесшӗн пулман. Ӗненмен вӗсем колхос туса май пурӑнма пуррине. Малтанах хӑш пӗрисем пађах та итлесшӗн пулман ун ҫинђен. Каланине хӑлхана та ђикмен.

Марйе инке, упăшкине питех те пăхăнман пирки йалта „Петĕр упăшки“ тенĕскер çеç арканма пуçланă ĕçе пулăшнă...

— Пĕрех хут, тавай кайса куратпăр пĕр-пĕр колхосне! Мĕнле унта, кăмсамолсем каланă пекехи вара? Хамăр куçпа курнине нимĕн те çитес çук!

... Çак шухăша ыттисем те йышăннă вара. Ыран ирхине йалтан пĕр вуник çухрăмра ларакан „Çăлтăр“ колхоса кайма çиђĕ хĕрарăма суйласа хунă.

— Ђăнах колхоспа пурăнма авани? Пĕрле ĕçлесен ĕç пулаŤи вăл? Кăмсамолсем суймаççĕи? Виçĕм çул кўршĕ йалĕнђе ертел турĕç те, саланса карĕçке?

— Хамăр куçпа кайса курас...

— Сăмахпа каланине ĕненме хĕн...

... Çур кун майлă пухура йăсланипе вара киле Васса питĕ ывăнса тавăрăнђĕ...

## 2.

Пĕлĕте хĕп хĕрлĕ хĕретсе тухса, хĕвел йăмрасем çине улăхрĕ те, ăшшăн кулса йађĕ.

Пит аван кун пулаŤ пайан...

Колхоса кайса курма хушнă хĕрарăмсем йалтан ирхи апатсем çисенех тухнă та, хаљ улăх тăрăх пыраççĕ. Утма çемçе, çăмăл. Хĕвеланăçĕнђен лăпкă çил вĕрет те, пушшех утма аванланаŤ—ытла шăрăх мар.

Пĕр çиђ-сакăр çухрăм утсан, çул улăхран сăрталла авăнса хăпарђĕ, унтан колхоса кайакансем пĕр пĕђĕк рашђа витĕр тухрĕç те, çул каллех аналла сулăнђĕ.

— Ав... курăнаŤ...—терĕ Васса, аллипе кăнтăр йеннерех кăтартса.—Е-е, хитреçке...

Пурте Васса кăтартнă çĕрелле пăхма тытăнђĕç. Лапам вырăн. Сулахайран, хыçалтан—вăрман. Йăвăç-

сем витĕр инçетрен ђукунçул курăнаť. Лапам варринђе, кăшт çӳллĕрех вырăнта—пысăк, хитре, хĕрлĕ тăрăллă çуртсем, пĕр вуннă ытларах. Йĕри-тавра сип симĕс те кăн кăвак... Тĕрлĕрен тырпулсем тинĕс пек, çил вĕрнĕ май çемçен хумханса выртаççĕ...

Çав тери ытармалла мар карттин курса пынипе, пирĕн инкесем колхос патнелле çывхарса пынă май пакăлтатса калаçма тапратрĕç...

— Ку колхос пуçланни пĕр пилĕк çул пулас ĕнтĕ.

— Темиçе йалтан пухăннă вĕсем, кунти çĕр ĕлĕк мăнастирĕн пулнă тет.

— Хĕр ђухне килкеленĕ кунта. Катакассинђи пăравой арман хуçисем тара илетђĕç ăна...

...Лапама ансан, урапа çулĕ çинђен тухса колхос çурђĕсем патне клевĕр хушшипе выртакан сукмакпа утрĕç.

— Е-е... Аванçке ку-у...—тесе йађĕ Марйе инке клевĕр пуçĕсем тăрăх аллипе шăлса.—Пилĕк таран вĕт! Мĕнешкел утă пулаť ĕнтĕ кунтан...

Çӳллĕ, çăра, сип симĕс, хăшпĕр çĕрте пăтрана-пăтрана ӳкнĕ клевĕр пурне те кăмăла кайрĕ.

— Аа-ай... Ку хĕл каçиђђен çитермеллĕх пур!

- - Пăхăр-ха: тинĕс пек выртаť вĕт..

— Кăна çитерсен çилĕсĕр ĕне те сĕт парĕ!

Пурте кулса йађĕç.

— Кун пеккине пирĕн ĕнесем тĕлĕкре те курман çав...

— Пирĕн çур йенне ыраш уламĕ те çук пулаť те..:

Çак вăхăтра вăрман йенђен, хĕрарăмсем умне, клевĕрпе сĕлĕ уйĕсем хушшипе икĕ ађа, пĕр вун-вуник çулхискерсем ђупса тухрĕç. Шуп шур, çанăсăр кĕпесемпе, йĕмĕсем те ђĕркуççи таран çеç.

— Ăçта кайатăр? Пирĕн патаим?—ыйтрĕ пысăкраххи.

— Есĕр мĕнле пурăннине килсе курас терĕмĕр,— терĕ Васса.—Пит лайăх пурнатăр теççĕ те сирĕн çинҫен. Епĕр те сирĕн пек пурăнма вĕренес тетпĕр...

— Пирĕн патра кашни кунах килеççĕ...—терĕ колхос аҫи.—Пайан туҫкиш арçынсем килте çукха, претçетаттĕл те хулана кайнă.

— Претçетаттĕл вырăнне кам та пулин пур пулĕçке?

— Пур... çекреттар. Пăраски аппа...

3.

— Еппин есĕ пире тӳрех илсе кайха.

Колхос аҫисем пирĕн инкесене пĕр пысăк, таса пӳрте йертсе кĕҫĕç. Сĕтел хушшинҫе пĕр хĕрарăм, вăтам çулсенҫискер ларат̆, аллинҫе хаçат. Васса ăна хăйсем колхоса мĕншĕн килнине каласа кăтартсан, вăл хаваслансах карĕ.

— Йурат̆, йурат̆ вăл килсе курни...

Хăй çав вăхăтрах пӳртрен ҫупса тухса, кил хушшинҫе такама темскер кăшкăрса кĕҫĕ.

— Кăштах канăрха. Çывăх çул мар, ывăнтăр та пуҫ. Сăмавар лартма хушрăм.

Пĕрик минутран сăмах çăмхи ним ҫарăнмасăр çаврăнма тапратрĕ... Васса, ҫи малтан, колхоса килесси мĕнрен пуçланнине каласа кăтартрĕ.

— Ҫăнах ĕнтĕ,—терĕ комун хĕрарăмĕ, куçпа курни аван вăл, тепĕр ҫухне сăмахпа каланине ĕненесех те килмест. Акă, хам çинҫенех калам сире. Еп кунта пĕлтĕр çеç килнĕ...

— Хăш йалтан?—ыйтрĕ Марйе инке.

— Урпакассинҫен. Ман упăшка Хĕрлĕ çарта çухалҫĕ. Пĕҫҫен хĕрарăмăн пурнăçĕ ырă мар ĕнтĕ, пит

наҫарҫҫӗ. Аҫисем виççӗ тан. Мана колхоса килесси ҫинҫен хӑшпӗрисем калакалаҫҫӗç, анҫах епӗ иккӗленеттӗм. Пӗрре килсе куртӑм та, кайран вара килесех терӗм. Ун ҫухне çын çитмест мӗн кунта.

... Икӗ хӗраҫа ҫей хатӗрӗсем, çырткаламаллисем илсе кӗртсе сӗтел çине лартрӗç, сӑмавар йатса кӗртрӗç.

Колхос хӗрарӑмӗ инкесене хӑналантарма тытӑнҫӗ.

— Çуне çӑкӑр çине сӗрсе çиййӗр...

— Ак, пирӗн пыла туганса пӑхӑр...

— Тен, ҫӑкӑт йуратаtри?

Инкесене ку ҫылай тӗлӗнтерҫӗ. Ытла та тем тепурçке... Марйе инке, йаланах пурне те пӗлесшӗнскер, ыйтмах тапратрӗ.

— Кӗсене вара колхосрах тӑватӑри?

— Пасарта-мӗнте илмени?

Колхос хӗрарӑмӗ кулса йаҫӗ.

— Ёненес килместим? Йалан сутӑн илме пирӗн укçа ӑçтан çитерес? Колхосрах тӑватпӑр... Çиййӗр, çиййӗр, килти пек пулӑр...

— Çийесси пулӗ вӑл,—терӗ Васса,—есӗ пире тӗплӗреххӗн каласа кӑтартха: çакнашкал, сирӗн пек пӗрлешсе пурӑнни уйрӑм пурӑннинҫен мӗнтен лайӑхрах. Каларӑмха паçӑр сана: епӗр те ӗнтӗ колхос тӑвасшӑн хамӑр йалта, анҫах пирӗн хӗрарӑмсем килӗшмеççӗха. Ес те пирӗн пекех хӗрарӑм, каласа кӑтарт...

Колхос хӗрарӑмӗ сӗтел хушшинҫе ларакансем çине йӗри-тавраллах пӑхса илҫӗ.

— Ҫи малтан,—терӗ вӑл,—пӗр йумах пеккине калам. Хулӑран епӗр шӑпӑр тӑватпӑр... Çав шӑпӑр хуллисене кашнине уйрӑмӑн хуçса тӑкма нимӗн те мар. Анҫах 20—30 хулла пӗр çӗре çыхса шӑпӑр тусан, çав

шăпăра ђасах хуçма çук... Çавнашкалах ĕнтĕ... пирĕн пурнăçра та.

Уйрăмăн пурăнакансем нушана пит ђас парăнаççĕ. Пĕр лаша вилсенех хресђен алăсăр тăрса йулнă пек пулса йулаť. Вара ђас-ђасах йалти пуйансем патне кайса пуç таймалла килет, лешĕсем... мĕн май килнĕ таран ђухăнсене авма тăрăшаççĕ. Ак, çулла: çемйере пĕр-ик вăйпитти çын—çĕр тĕслĕ ĕç тумалла... Пĕрлешсе пурăнсан ун пек мар: пĕрлештернĕ пурлăх вăйлăрах, пĕђĕкрех сийенсем сисĕнмесĕрех иртсе кайаççĕ. Пуйансене тархаслани те кирлĕ мар. Пуринђен лайăххи вăл—акă мĕн: колхосра кашнин пĕр ĕç. Пĕрисем, калăпăр, суха тăваççĕ, теприсем ĕне сăваççĕ, виççĕмĕшсем апат пĕçереççĕ... Ĕçлессе те йалти пек мар, сехет тăрăх ĕçлеççĕ. Пĕрлешсен тата пур ĕçсене те машшинсемпе тума май килет. Машшинсем ĕçсене калама çук çăмăллатаççĕ—анђах уйрăмшар ђухăнсен пысăк машшинсем илме вăй çук. Пĕрлешсен çеç илме пулаť, тата пĕрлешекенсене патшалăх та аван пулăшаť...

4.

— Хаљ аťăр, курса çӳрĕпĕр,—терĕ колхос хĕрарăмĕ, инкесем ĕçсе-çисе тăрансан.

Урамра хăйсен колхосĕ çинђен калама пуçларĕ.

— Пĕр пилĕк çул малтан çакăнта шăналăксенђен виçĕ ӳпле туса пурăнма пуçланă. Çак хаљ йĕркипе ларса тухнă çуртсем труках пулман вĕсем. Иртнĕ кунсенђе йăвăрлăхсем те пайтах пулнă, пĕр çулхине колхос ђутах саланса кайман...

— Илтнĕ ун çинђен...—терĕ инкесенђен пĕри.

— Илтнĕ те пулĕ. Пăтратакансем пулнă ун ђухне. Кайран вара вĕсене сирпĕтнĕ те, колхос ђленĕсем

хӑйсем хытӑ тӑрӑшнипе, тата патшалӑх пулӑшнипе колхос пурнӑҫне йусаса ҫитернӗ.

... Малтан уй-хирсене курса ҫавӑрӑнӡӗҫ. Тинӗс, тинӗс... Кӑкӑр таран кашласа ларакан сӗлӗсем, темӗн йӑвӑрӗш пуҫахсем айалалла туртнипе авӑнакан ыраш-сем, шурӑ та кӗрен тӗслӗн ӡеӡекленекен клеверсем ӡун хавалне ҫав тери ҫӳлелле хӑпартса йараҫҫӗ...

— Сирӗн тырӑсем мӗншӗн кунашкал аван пу-лаҫҫӗха?—тесе ыйтаҫҫӗ инкесем.

— Вӑрлӑхсене йалан тасататпӑр. Суха-акине вӑ-хӑтра, йалан плуксемпе тӑватпӑр. Машшинпа акатпӑр. Ҫӗрсене, навуссӑр пуҫне, тӗрлӗрен минерал ҫӑнӑхӗсемпе ҫемҫететпӗр... Пӗр сӑмахпа, акрономсем мӗнле хушаҫҫӗ, ҫапла ӗҫлетпӗр...

Тӗлӗнеҫҫӗ инкесем...

— Пирӗн патра та ҫапла тума пулаӗши?

— Ма пулмасӗ!?—тет колхос хӗрарӑмӗ.—Ӗлӗк ку ҫӗрсем ҫинӡе те тепӗр ӡух акнӑ вӑрлӑха та пуҫта-райман вӗт! Хаӡ ак хӑвӑр куратӑр...

— Куратпӑр ара... Куратпӑр...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Хӗвел колхос хыҫӗнӡи вӑрмансем ҫинелле сулӑнма пуҫларӗ. Пирӗн инкесем уйран таврӑннӑ ҫӗре колхос пуҫлӑхӗ ҫитнӗ.

Хӗрарӑмсем колхоса мӗншӗн килнине пӗлтерсен, вӑл та инкесемпе пит хавасланса калаҫма тытӑнӡӗ.

— Ну, мӗнле пек сире пирӗн пурӑнӑҫ? Пирӗн тырӑсене куртӑри? Аӗӑрха, хам кӑтарткалам тата сире... Аӗӑр.

Пӳртсенӡен инҫерех ларакан лупас айне илсе кӗртрӗ. Е-ей, мӗн ҫук кунта!

— Ҫаксем — шатах ҫӗр ӗҫлемелли машшинсем...

Пăхăр ак. Ку—акмалли, ку—сăвăрмалли,—ку вăрлăх тасатмалли, леш—çерем çĕтмелли плук, ав тата утă çулмалли, утă пуçтармалли... Йĕркипех. Темĕн ĕçлемелли те пур.

Тĕлĕнеççĕ инкесем...

— Аӑрха тата,—терĕ претçетаттĕл, йунашар ларакан темĕн тăршшĕ сарай алăкне уçса.—Курăр...

Ай, тур-ту-рр!..

... Йĕркипе, уйрăм пĕђĕк картасенђе пысăк, самăр ĕнесем тăраççĕ. Пурте пĕрешкел—хĕрлĕ. Вăрахăн умĕсене хурса панă ђĕрĕ курăка кавлеççĕ.

Инкесем ниçта кайса кĕрейми ыйтса пĕлме тапратрĕç...

— Миçе ĕне сăватăр?

— Вăтăр тăваттă...

— Ăçтан туйаннă есĕр пĕрешкелскерсене?

— Ђулхула кĕпĕрнинђен илсе килнĕ...

— Кун ђухлĕ сĕте ăçта ђикетĕрех?

— Çу савăђĕ пур пирĕн... Кайса курăпăрха ак. Савăт урлă кунне 25 пăт сĕт кăларса, икĕ пăт çу тăватпăр кунне...

— Айтурух! Çуне... сутатăр пуљ?

— Ђукун çул йунашарçке пирĕн. Таçта та йама май пур... Ђăннипе каласан, тупăш питĕ лайăх илетпĕр епĕр ĕнесенђен...

... Кун хыççăн инкесене претçетаттĕл ађа сырăшне илсе кайса кăтартрĕ. Тап таса пӳртре—пĕр вунпилĕк ађа вырăнĕ. Унтах—ађасене апат çитермелли. Ађисем хăйсем кил хушшинђе выљаççĕ, вĕсене икĕ хĕрађа пăхаççĕ.

Унтан пахђа-çимĕççене, пыл-хурђĕсен утарне, çу савăтне, апат çимелли çурта кайса курђĕç. Каç пулсан

пуринҫен ытла тĕлĕнмелли тупăнҫĕ: пĕр пĕҫĕк çеç трупаран йурă, мусăк калани илтĕнет.

— Çак ĕнтĕ ратио...—терĕ претçетаттĕл.—Мускавран калани-йурланисене илтетпĕр... Пушă вăхăтра пит аван...

... Тепĕр кунне, инкесем киле кайас умĕн, претçетаттĕл вĕсенҫен:

— Мĕнле пекха сире... пирĕн пурнăç?—тесе ыйтрĕ.

Инкесем пĕрпĕрин çине пăхкаласа илҫĕç.

— Аван...

— Пурте кунашкал пурăнсан пырĕҫҫĕ те, пиртен пулас çук пуљ вăл...

— Ма пулас çук? — терĕ претçетаттĕл. — Мĕн, пирĕн колхос та труках çакнашкал пулман вĕт!

— Епĕр йаланах çапла,—терĕ Васса,— пулмасť, тетпĕр те, нимĕн те тумастпăр...

— Ĕçлемесен пулмасť çав, — терĕ претçетаттĕл.

---

Халиҫҫен курманни, тĕлĕнмелли...

Ҫаплă тырпулсем. Машшинсем. Ăратлă выљăхсем. Çу савăҫĕ. Аҫа сырăшĕ. Темĕн те, темĕн те...

Килелле утнă ҫух, инкесем кашни хăй мĕне пит асăрханине каласа пыҫĕç. Пĕрер хут та мар, çине-çине, темиçешер.

Комсомолсем суйман иккен. Ҫăн каланă. Колхос пурнăçне ытарма та çукçке, ытарма çук!..

Васса хĕпĕртесе пыраť... Сисет вăл инкесене колхос пурнăçĕ пит кăмăла кайнине. Пурте йуратрĕç ăна. Ех, колхоса кайни усăллă пулҫĕ, ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитет.

— Тĕрĕссипе калăр ĕнтĕ...—терĕ вăл йал патнелле çитнĕ ҫух. — Хаљ есĕр колхос тума килĕшетĕри?

— Килĕшетпĕр! — терĕ Марйе инке, ђышкине ђăмăртасах. Ыттисем пĕрпĕрин çинелле пăхса илђĕç.

— Есĕр тата? — ыйтрĕ Васса.

— Епĕр те...

— Тахçанах çапла кирлĕђђĕ!

Васса аллисене шарт! çапрĕ. Шăмшакĕ унăн çак самантра çав тери çăмăлланса карĕ.

— Ара, кам пĕлнĕ ăна...—терĕç инкесем.—Хаљ куртăмăр та ĕнтĕ — ĕненетпĕр. Епĕр унашкал пуласса шутламан та... Ђăнах та пит аван мĕн...

---

# ПĂШАЛ САССИ.

## I.

— Ђипер кайса кил еппин, ытла каçах ан йул, терĕ çамрăк арăмĕ Кришшана, хулана тухса кайнă ђух тутăрпа икерђ ђĕркесе парса. — Васкарах çŭре!

— Йурĕ, йурĕ... Хамах пĕлепĕçке ĕнтĕ, пĕђĕк ађа мар, мĕн ес ытлах хыпкаланатăн?—терĕ Кришша.— Каçђен иккĕ те хутламаллăх пур вĕт... Ну, еп вĕç-тертĕм еппин, каçалапа çаврăнса çитеппех!..

Çак сăмахсемпе Кришша пŭрт умĕнђи картлаш-касемпе ђупса анса ђасах анат урамалла пăрăнса çухалђĕ.

Кришша арăмĕ — сап сар çŭçлĕ, уйар кунхи пĕлĕт пек кăвак куçлă ывăлне алла тытса, ĕмĕртме пуçларĕ. Ађа тени вăл—çамрăк упăшкапа арăмшăн ђи пысăк савăнăç. Ниме те йуратмаççĕ вĕсем хăйсен пĕђĕк, шап шур çŭçлĕ, мăнтăркка ађине йуратнă пек.

... Телейлĕ çав Нинă! Кришшапа вĕсем çулталăк та çурă малтантарах çеç пĕрлешнĕ. пĕрпĕрне мĕн

ђёкренпех астăваççĕ, пĕђĕк ђух шкулта та пĕрле вĕреннĕ... Ах, ађа ђухнехи пурнăç! Халђхи пекех вăл Нинă куçĕ умĕнђе.

... Йал хыçĕнђе çут çĕлен пек Мăђкаш шывĕ йавкаланаť, ăна икĕ йенђен симĕс ката пусса илнĕ. Çавăнта вара — хур, кăвакал, ађапăђа. Çуркунне, йешĕл курăк анђах симĕсленнĕ вăхăтра, тусем, çырмасем тăрăх ĕнесем çитерсе çӳренĕ; кайран, ӳсерехпе, каç-каç — вăйă-кулă, йурă-ташă, киллениђђен, тепĕр ђух çурçĕрђђен!

... Хĕрсемпе вăйа тухма пуçласанах Кришшапа Нинă туслă пулнă. Нинăна Кришша пек урăх никам та килĕшмен... Йепле ан килĕштĕрха çавнашкал çивĕђ хуп хура, кăтра çӳçлĕ маттур? Йалĕпе те унашкал ташăç пулман, йашсене кулăпа килентерекен... Виçĕм çулђђен вăл пĕр амăшĕпе анђах пурăннă, пĕтĕм ĕçе хăй туса пынă, ашшĕне астумасť те. Çапах, халиђђен те вăл никамран та, нимрен те йулман вĕт.

... Амăшĕ вилиђђенех Кришша хут таврашĕпе çыхланса кайрĕ. Малтан Нинă пĕр вăхăт айăккăн та пăхса пăхрĕ ун çине. Йалйышсем темĕскерле сăмахсем сарма пуçланăђђĕ... Турăран уйăрăлнă, антихриса сутăннă, теђĕç. Халђ ĕнтĕ вăл иртсе кайнă... Кађђа тухнăранпа Нинă ăнланса çитрĕ Кришша мĕншĕн тăрăшнине. Пĕлет вăл, пит лайăх пĕлет: Кришша хăйĕншĕн кăна мар, пуриншĕн те ĕçлет, пурин пурнăçне те йусасшăн.

... Ак, вăл пĕлтĕртенпех йалканашĕнђе ĕçлет, кăçал каллех суйласшăн теççĕ ăна... Йуратаççĕ Кришшана йалйышĕсем, унăн уçă кăмăлĕшĕн, çивĕђĕшĕн, ĕçлеме йуратнăшăн йуратаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Нинă хăйĕн çирĕм çулхи упăшкине нимĕнпе те улăштарас çук.

... Çапах, хăшĕсем, йалти çынсемех... Куçпа курмĕҫҫĕç Кришшана, хирĕç пулсан та ун çине тискер кайăк çине пăхнă пек пăхаççĕ. Ав, усламçă Митрийех... Пур çĕрте те Кришшана хирĕç, пухусенҫе те темтерпĕ каласа пĕтернĕ... Пĕлет Нинă: Кришшасем тапратса йанипех йалта иртнĕ хĕлле самооплошенипе аллă тенкĕ ытла хуҫĕç... Вăл кăна мар, ыттисем те пур йалта. Кришша вĕсемшĕн —ҫи пысăк сийен. Пĕҫҫен пулсан татаҫҫĕ, унăн хыççăн йалти çамрăксем пĕтĕмпех кайрĕç, Кришша çамрăксене хăйĕн майлă çаварнă... Халĕ ĕнтĕ—вĕсем колхос тăвасшăн... Нумайăшĕ килĕшнĕ те кунпа.

Йалта хăшпĕрисем паҫах хирĕç, ку ĕçе вĕсем тутарасшăн мар... Çĕркаç çеç пухура çурçĕрҫҫен майлă тавлашрăмăр та, пирĕннисем çĕнтерҫĕç,—терĕ Нинăна хулана кайас умĕн Кришша... Çавăнпа та ĕнтĕ Нинă пăртак шикленет, хăрат Кришшашăн.

2.

— Аван, аван, Петров! Сан пеккисем хамăр таврара пĕр вунă çын пулсан, епĕр пит аван ĕçлемелле мĕн! терĕ, куçлăхне тӳрлеткелесе, симĕс пустав витнĕ сĕтел хушшинҫе ларакан çĕрпайĕн пуçлăхĕ.

Кришша кунашкал куç умĕнҫех мухтанипе, нимле мар пулса кайрĕ.

— Аванни мĕнĕ... Ĕçлес пулат çав. Хамăр алăпа ĕçлесе тумасан, кам ĕçлесе памалла?—терĕ вăл хирĕç.

— Так, снаҫҫăт...—терĕ каллех куçлăхлă пуçлăх. Сирĕн колхоса ыран çирĕплететпĕр. Кулаксем виçĕм çул çĕр пытарса йулса, унпа виçĕ çул усă курнине тĕрĕслеме ыранах комиççи йаратпăр.

— Васкарах тăвасҫĕ çав,—терĕ Кришша.

— Тăватпăр конешнă.

— Çапла, Петров... Йалта ĕçлеме ђас-ђасах йăвăр пулаť, ăна епĕр пурте аван пĕлетпĕр... Анђах уншăн ђарăнса тăрсан, пирĕн ĕç пулас çук. Ну, сан копператтив мĕнле ĕçлет?

— Аптрамастпăр пекха хаљ, сарăлсах пыратпăр... Ђленсен шуђĕ икçĕр аллăран иртрĕ.

Ĕçсене туса çитернӗ май, Кришша киле кайас шутпа тăђĕ.

— Хаљ килеи?—тесе ыйтрĕ пуçлăх.

— Киле çитес пулаť... Ахаљ те каçа йултăм,—терĕ хирĕç Кришша.

— Аван, Петров,—терĕ каллех пуçлăх.—Ĕçлесен пулаť. Ним умĕнђе те ђарăнса тăмалла мар. Пуринђен ытла—пирĕн, комуниссен... Есĕ мĕнле, ђлениха?

— Ђлен марха, кăнтитат кăна. Хамăр йалта комсомол йађейккин çекреттарĕ.

— Капла та йапăх мар... Сан пек çынсем, Петров, совет влаçĕпе парттине пит кирлĕ.

Кришша алăк патнелле пырса тăђĕ.

— Мĕн тăвассине епĕр ыранах тăвăпăр,—терĕ йулашкинђен пуçлăх.—Сыв пул еппин.

— Сыв пул!

## 3.

Кришша пĕр вуникĕ çухрăм кайсан, хĕвел йерипен, таçти хăйаматри тусем, вăрмансем хыçне анса ларђĕ. Тĕттĕмленсе пынă май çĕр çине нӳрĕк ӳкрĕ. Кришшан тата тепĕр пилĕк çухрăма йахăн каймаллаха. Васканипе вăл урисем ывăннине те, хырăмĕ выçнине те сисмест. Ун çинђе марха Кришшан шухăшĕсем, вăл мар уншăн хакли. Шухăшсем урăххи çинђе—вĕсем йалти, хăйсен урам хушшинђи ĕçсем çинђе.

... Йалта пĕҫҫенпе пĕрех. Пулăшакансем питĕ сахалха. Комсомолĕссем те ҫамрăкрах, вĕсене ҫул кăтартса пыни кирлĕ, унсăрăн вĕсем ҫасах айаккалла та пăрăнма пултараҫҫĕ. Тепĕр ҫух тем пекех йăвăр пулаť... Ҫапах. та—пăрахма ҫук, йурамасť пăрахма пуҫланă ĕҫсене...

Акă ĕнтĕ колхос пулсах ҫитет. Ыран ҫирĕплетететпĕр, терĕҫ. Йалти карма-ҫăварсем тем пекех хирĕҫ кăшкăрҫĕҫ пулин те, пулаť пулатех... Ҫирĕплетсен, ҫĕр касса параҫҫĕ, унтан вара ĕҫе те тытăнма пулаť. Анҫах кунта та ĕҫсĕр пулмасť-ҫке, малалла та нумай ĕҫлемелле.

Килте пит сахал тăмалла килет. Ҫынсем авăнсем те ҫапса тирпейлерĕҫ, Кришшан ҫуррине те ҫитмен, Нинă пĕҫҫен туса ҫитереймест пурне те... Пыраť тата вăл хирĕҫмест, атту пĕтĕм ĕҫе ҫăрмантарĕҫҫĕ...

... Инҫех те йулмарĕ киле ҫитесси. Малта—вĕтĕ вăрман ĕмĕлки тĕттĕм витĕр кăтраланаť, вăрмана ҫитсе, ҫырма урлă каҫсан, вара киле ҫитнĕпе пĕрех. Вăрман хĕрринҫен, курăк ҫийĕпе хăпарса, Кришша ҫĕркуҫҫийĕсене нӳрĕк ҫӳҫентерет...

... Тепĕр вунпилĕк минутран ката хĕррипе алтса тухнă канав урлă ҫупса каҫса, Кришша сапаланса ларакан шĕшкĕ, ҫăка, вĕрене тĕммисем хушшипе пĕтĕрнекен такăр сукмак тăрăх тата хытăрах утма пуҫларĕ. Ак, ак, ҫырма урлă каҫмалла кăна... Вара кил.

4.

Ҫырма патне ҫитнĕ ҫух, сукмак ҫатан карта патĕнҫен пăрăнаť. Ҫӳллĕ вăл карта, выҫăхсем патшалăх вăрманне кĕрсе кайасран тытнă.

Вăрманта шăп... Ҫĕр ҫине нимĕн те йулман пек туйăнаť, пĕр сас-ҫӳ те ҫук. Халĕ ĕнтĕ паҫăрхи пек те мар, паҫах тĕттĕмленсе ларҫĕ, таврари йăвăҫ тĕммисем

тĕрлĕрен хура капансем пек курăнаççĕ... Ура айĕнђи сукмак çеç тĕтреллĕ кăвакăн палăрса пырат.

— Çат-çат-çат! ђупса анђĕ Кришша сукмакпа çырманалла. Шăмшакĕ хăйĕн çаплах çăмăлланса пырат.

Çав вăхăтра... çатан картан айккипе икĕ ĕмĕлке куклĕнсе, упаленнĕ пек пыђĕç... Ăна Кришша сисмерĕ...

Ах, ма сисмерĕши?!

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

— Кĕрс!

— Кĕрс!..—турĕ икĕ хут умлă-хыçлă пăшал сасси питĕ хăвăрт. Унтан—шатăр-шатăр... шат-шат-шат!.. йанраса кайрĕç вĕсем шăппăн ыйхăласа ларакан шĕшкĕ, вĕрене, çăка тĕммисем урлă, таçта хăйаматалла, çырма тăрăх...

— Лăпăр-лапăр... лăп-лап-лап.. вĕçсе кайрĕ çырма тăрăх тăвалла тăмана, пăшал сассипе трук хăраса кайнăскер.

— А! А-ай! Кра... Краву-ул!..—кăшкăрса йађĕ çырман тепĕр йеннелле хăпарма пуçланă Кришша.—Хулпуççи!..

Вут çинђе хĕртнĕ пăшатанпа ђикнĕ пек... пĕçерсе кайрĕ... Кришша хăйĕн хулпуççийĕнђен çулса илђĕ... Ах, ах!.. Куç умĕнђи шĕшкĕ, вĕрене, çăка тĕммисем туйри кађђăсемле ташлама тапратрĕç, пуçĕ пĕçерсе кайрĕ, ура айĕнђи çĕр çемçелнĕ пек туйăнђĕ...

— Ласт... ӳкрĕ сукмака урлă Кришша. Куçĕсем хупăнђĕç, хулпуççийĕнђен йарса тытнă пӳрнисем витĕр çăра, вĕри йун сарăлса кайрĕ...

Йун... Çамрăк йун...

... Карта хыçĕпе упаленсе пынă ĕмĕлкесем хаљ çук ĕнтĕ. Вĕсем хăйсен ирсĕр ĕçне тусанах çăра хăмăшсем ăшне тапса сикнĕ...

Вăрманта каллех шăп... Шĕшкĕ, вĕрене, çăка тĕммисем малтанхи пекех ыйхăра, вĕсем ним те пĕлмеççĕ, вĕсем ђунсăр...

... Пĕр мĕскĕн Кришша çеç сукмака урлă выртса ђылайђђен тапаланђĕ, унтан вăл та пĕлми пулђĕ.

Хĕвелтухăç йенђен, мăн вăрман хыçĕпе, ĕне çилли пек тулли уйăх хăпарђĕ...

5.

Тем вăхăт выртнă кăпăшка сар çулçăсем çинђе Кришша, ăна вăл пĕлмест. Хулпуççинђе шутсăр ыратнипех хăрах ђавси çине тăђĕ.

Вăрманта малтанхи пекех пĕр сас та çук... Çырман тепĕр йенђи йăвăçсен сайра çулçисем уйăх çуттипе пăхăр тĕслĕленеççĕ. Пĕлĕтре çăлтăрсем сайрала пуçланă. Сулхăм.

Кришша тăна кĕрсе мĕн пулнине трук шутласа илђĕ. Çавăнтах сылтăм хулпуççийĕнђен çавăрса тытрĕ. Пиншак йĕпе, йăпăлка. Ура çине тăма тăђĕ, сулăнса кайрĕ. Татах тăма хăтланђĕ, каллех сулăнђĕ.

— Пĕтрĕм! Пĕтрĕм! Ах, пĕтерђĕç!..—тесе, хуллен йăнăшса, макăрса йађĕ, шуралса кайнă пит çăмартийĕсем çийĕпе пысăк, вĕри куççуљсем пĕрин хыççăн тепри сике-сике анђĕç.

Пĕр минут, иккĕ, виççĕ выртрĕ хускалмасăр, айак çинђе... Унтан вăрахăн, хуллен ура çине тăрса, сукмакпа утрĕ. Урисем вăйсăрланнипе, хăй йенђен-йенне сулланса пырађ.

Пуçĕнђе хăйĕн шухăшсем, шухăшсем...

Мĕн пулĕши хаљ, мĕн пулĕши?

Йалăн уй хапхи патне çитнĕ ђух Кришшан суранлă хулпуççийĕнђен тытса пыракан алли каллех йĕпенме

пуçларĕ. Выртнă ђух йухма ђаранна йун тепĕр хут сăрханма тытăнђĕ.

Кришшан урисем ђĕтреме тапратрĕç, куçĕсем шывланса, тĕтреленсе кайрĕç... Ак—утăм, иккĕ тусанах тепĕр хут тăсăлса ўкмелле пек; анђах Кришша йулашки, мĕн пур вăйне пухса, картаран та пулин тытса, малалла шăваť.

— Киле!.. Киле те пулин çитесђĕ!.. çавăрнаť унăн пуçĕнђе шухăш.

Хапхаран кĕђĕ, урампа пыраť, тепĕр пилĕк ђалăш çеç каймалла... Куçĕсенђе пур тĕслĕ вутсем çутăлса кайрĕç, урамри каскасем, çăл тăрни, йăвăçсем кутăнпуçăн çаврăнма пуçларĕç.

— Лăп! пырса сулăнђĕ хăйĕн вĕрлĕк алăкĕ умне.

— Ђĕрр-иик! туса уçăлса кайрĕ алăк Кришша кĕлеткин йăвăрăшпе. Кришша алăк айĕ урлà йарса пусма тăђĕ, анђах мĕскĕнĕн вăйĕ çитеймерĕ, кил хушшинелле каçарма ĕмĕтленнĕ ури алăк айĕнђи хăмаран çакланса, Кришша кил хушшинелле тăсăлса ўкрĕ.

— О-ай!—тесе мăннăн, кăкăртаҡ йăнăшса йађĕ. Ўппĕн ўкнипе, хулпуççийĕнђи суранĕнђен çăра йун пĕлкеме тапратрĕ...

6.

... Тĕттĕмленсе пынă май, Нинăн ăшђикки хытăран хытă варкаť. Кришшана кĕтсе нумайђђен çывăрман вăл, выртсан та çывăрни майлă пулман. Темиçе хутђен сике-сике тăнă, ђўређерен те, урама та тухса пăхнă. Унăн пуçне темĕнле шухăшсем те кĕнĕ, хăранă вăл Кришша хуларан ђас таврăнманшăн.

Кил хушши алăкĕ ђĕриклатса, ун хыççăн такам:

— О-ай!—тесе мăннăн кăшкăрнипе вăранса, вăл хăвăрт сиксе тăрса, кил хушшине ђупса тухрĕ... Сасар-

тăк, урам алăкĕ патĕнђе çын ӳпне выртни куçа курăнса кайсан, Нинăн ăшђикки мĕн тери хыпса кайнине никам та каласа кăтартайас çук...

— Кришша! Ай, Кришша!.. Мĕн пулђĕ?..—тесе кăшкăрса йађĕ вăл, упăшки патне ђупса пырса ђасрах çĕклеме тăђĕ... Кришша аллисем лăнђăр усăнђĕç.

— Вилнĕ!.. Вĕлерђĕç! Ай!.. Ай!.. Вилнĕ-ĕ-ĕ!—ђунтан пĕтĕм ăшђикпе, пĕтĕм ӳпкипе уççăн çухăрса йаđĕ Нинă.—Пулăшăр!.. Вилнĕ!.. Ай-ай-а-ах-ах...

Сас йанкăр-уйар, уçă сывлăша çурса, йал тăрăх йанраса кайрĕ. Нинă ђасрах урамалла ђупса тухса унталла-кунталла пăхса илђĕ, унтан йунашар пӳртĕн кантăкĕнђен:

— Шан-шан-шан!.. тутарђĕ ђышкипе.

— Тăрăр-ха, тăрăр! Кришшана вĕлернĕ!..—хăй кайалла упăшки патне ђупса пырса, ăна йăтма тапратрĕ...

Пĕр килтен, тепринђен, пĕрин хыççăн тепри ыйхăллă çынсем сике-сике тухса, кăшкăрса макракан Нинă патнелле пухăна пуçларĕç. Йăтăсем вĕрме тытăнђĕç...

— Мĕн пулнă?

— Хăçан? Мĕнле?

— Камши?—кĕрлесе карĕç сасăсем.

— Ђасрах, пӳрте йăтса кĕртĕр!

— Йунне ђарасђĕ!

... Çемçелсе кайнă Кришшана пӳрте йăтса кĕртсе, вырăн çине хуђĕç. Халăх пухăнса кайрĕ. Йăслаççĕ, калаçаççĕ... Ђас, çарамаслантарса йунне çурĕç те, таса алшăллипе сурана хыттăн туртса лартрĕç.

— Тавай, лаша кӳлĕр ђасрах! Пуђнитсăна илсе кайас!

Икĕ çамрăк лаша кӳлме ђупрĕç.

... Ђылай вăхăт ним пĕлми выртнă Кришша, питне

шывпа йĕпетсе тăнă хыççăн, вăрахăн пуçне пăркаларĕ те, куçне уçрĕ. Халăх труках шăп пулђĕ.

— Нинă...—терĕ Кришша, темле шалалла кайнă сасăпа.—Еп килтеи?

— Килте те... Ай-ай, Кришша-а! Пĕтрĕмĕр вĕт!.. терĕ ăна хирĕç Нинă, вăрăмăн, ађалла йĕрсе йађĕ.

— Нинă, килха кунта... Ађана та кўр...

Кришша аллине ађине пађĕç.

— Ыѣăлăм,—терĕ Кришша,—ўссен хам пекех пул. Пуйансемпе ан туслаш. Асту, аçуна пуйансем пĕтерђĕç. Хамшăн мар, йалйышшăн... Пурте лайăх пурăнђăр, тесеђђĕ еп... Асту çавна... Нинă, ес те ман вырăна пул... Колхос ĕçне ан пăрахăр. Пурте пĕрле пурăнăр...

Йулашки сăмахсем питĕ вăйсăррăн тухрĕç. Унтан трук темиçе хут кĕскен-кĕскен хашкаса илђĕ, куçĕсем ђарăлса кайрĕç те... ђĕри тапма ђарăнђĕ...

Нинă ђылайђђен ним ђĕнмесĕр, йупа пек хытса пăхса тăђĕ. Унтан кукленсе упăшкине ђуп турĕ те:

— Йурĕ, Кришша! Епĕ сан вырăнна пулăп!—терĕ.

---

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

Уполномоч. Чувашглавлита № 1145. Заказ № 2633. Тираж 4.000 экз.

Цена 25 коп.

Л. Агаков. БАБЫ

Чувашское Государствен. Издательство

Чебоксары, 1931 г.